# Ухсай Яккăвĕн тĕнчинчи шыв кульчĕпе мунча рехечĕ

...Курка çĕлеттĕм хупахран
Ĕçеттĕм шыв çăлкуçĕнчен...
("Юратрăм эп, хирсем, сире...")
Пĕлмест-мĕн мунчари сиппе
Ура çинче çеç кĕрекен...
Эп сак çинче маччапалла
Тăратрăм пĕççĕм-каççăма.
("Силпи енчи çилсем")

## "Йĕпеттĕр шалкăм çумăр кĕпе витĕр..."

"Шыв - тĕссĕр, шăршсăр, витĕр курăнакан, кислородпа водород молекулисенчен тăракан шĕвек", - типпĕн çырса кăтартать энциклопеди. Поэт тата шыв... Ăнланмалла мар çыхăну. Вулакан ÿпкелессĕнех туйăнать: "Тупнă çырмалли. Мĕнпе кăна анрамаççĕ пулĕ патшалăх укçине сая яракан ку ăсчахсем. Кун пек пĕр-пĕр поэт сăвви-поэмисенче шапа, шăна, пăван тата ытти армак- чармаксем те шыраса лĕпĕртетме пулать". Хам та çаплах шутланăччĕ, Ухсай Яккăвĕн хайлавĕсене тимлĕрех, пусăрăнарах вуличчен. "Силпи енчи çилсем" лирикăллă поэмăпа паллашрăм та, "Якку Гаврилчă" (Мускаври студент чухнех) шыв асамĕпе хăвачĕн тыткăнĕнче пулнине ăнланса илтĕм:

Поэт таланчĕ çитĕнет
Чи шăплăхра анчах хитре,
Ун кăмăлĕ тĕрекленет
Çилре, ШЫВра та кĕрлевре.

Поэт вĕри хĕвел айĕнче те, тусанлă хулара та çÿреме юратман. Пĕрехмай вăрман е йывăç сулхăнне, kaçхи юханшыв е кÿлĕ хĕррине, дачăна, мунчана, шалкăм çумăр айне тарма ăнтăлнă. Ăçта нÿрĕрех - поэта çавăнта чун туртнă. Ĕненмен çынна Ухсая тимлĕрех вулама çеç сĕнес килет.

Апла шыв... Мĕншĕн? Ма-ха Ухсай Силпи шывне культ шайне çĕклет? Мĕншĕн Ухсай хĕл çинчен сахал çырнă (тен, шывĕ куçманран, шăнса ларнăран, вилнĕрен ку вăхăтра)? Авалтанах этемлĕхе çĕр-планета çинче тытса чарма çук тăватă вăй ("стихия" теççĕ вырăссем) витерсе тăнă: çĕр, сывлăш, çулăм, шыв. Астрологсем

çак вăйсен витĕмне сын шăпипе апла та, капла та çыхăнтарса пăхрĕç. Тен, чăнлăхĕ те пур кунта? Çеçпĕл, ав, çулăмпа сывлăш стихийисене кăмăлланă. Константин Иванов - çĕрпе шыва:" "Шывсем çинче, çĕр çинче хуçа пулса вăл тăрать". Пĕр ялта, пĕр Силпи шывне ĕçсе, пĕр тăпра çинчи çăкăра çисе ӳснĕ Ухсай та Иванов пекех çĕрпе шыв вăйнех пăхăнать, пуççапать. Хăйне "тăпра поэчĕ" тесе тăтăшах палăртса каланипех, сăвăçă шывсăр та пурăнаймасть. Ухсай тĕнчине хальхи схемăпа çапла сăнлама пулать. Поэтăн хăйĕн Эдем пахчи (Библири çылăхсăр, таса тĕнче, унăн тăпри этеме ним ĕçлемесĕрех чи тутлăхлă çимĕçсем парать, çылăха анчах ан кĕр). Эдем пахчине тулăх кӳрекенĕ тата çылăхсенчен сыхлаканĕ, тасатаканĕ - ШЫВ. Ухсай хăйĕн пахчинчен каясшăн мар, çак пахчана таптакан, пĕтерекен çылăхлă тĕнче пур, ăна типĕтекен шăрăх та тусанлă çанталăк, хула шавĕ, критиксен вĕчĕрхенĕвĕ пур: "Ман кантăк умĕнче утса çӳрет пек критик. Пӳрнисемпе юнать пек йăнăш çырасран". Ӳпре çыртнă пек анчах уншăн ку: "Хам пĕлнĕ пек шăрататăп кĕввĕме". Вăра кăмăлне çĕклеме е усала манма Ухсай шыва чăмать, çумăрпа пылчăкланнă тăпра çинче çарран чупать, мунчари шыв пăсĕпе исленет.

"Шап-шур пĕлĕт тăрăх çӳреме, куратăн-и, ман урасем тă пралла..." - текелет поэт, хăй çĕр ачи пулнине çирĕплетсе. Шăвшавлă романтика илĕртмест ăна: "Эпĕ хам хресчен ачи, шухăшлатăп хресченле". Çĕр хресченĕ хăй тăпри çинче хăех чакаланать, поэт та çавах. Суха тăвакан хресчен ывăннине сирсе яма сиплĕ сивĕ шыв ĕçет, поэт та: "шывна сыптар, Силпи çăлкуçĕ!"- тесе ыйтать. Шуратăл шывне "мана сиктер, тытса силле-ха тек" тесе чĕнет: "Вăра хăпарĕ çамрăк ӳт вăй-халĕ, çакланмĕ чир те, хуйхă та инкек". Ахальтен мар Ухсай Твардовскипе туслă пулнă, "Яша тусĕ" хăйĕн вырăс ĕçтешĕнчен юласшăн пулман. Лешĕн те шыв çинчен "Василий Теркин" поэмăра çапларах калани пур:

**Тур панă шывран лайăххи çук,**
**Сивĕ çăлкуçран аванни çук.**
**Шывĕ кăна шыв пекех пултăр.**
**(куçарăвĕ хамăн - В.А.).**

Ухсай çумăра пит юратать. "Ача чухнехи çăлтăрăм" трилогире те хăй шăпăрлан чухне çумăрпа мĕнле паллашни, унпа киленме пуçлани çинчен чуна витермелле каласа парать сăвăçă. "Йĕпеттĕр

шалкăм çумăр кĕпе витĕр..." - текен йĕркешĕнех поэта эпир палăк лартма тивĕç. "Тăпра поэчĕ" çеç çапла, шаман е чӳк тăвакан хресчен майлăрах, чĕнсе, йыхăрса калама пултарать.

"Çу, çумăр, çу", - тет Микул Пулар та, паянхи сăвăçă, поэзири аппĕ хыççăн. Çумăр Ухсая "çичĕ вăй" парать, "тиха пек кĕçентерет", уя чĕнет - ("Çумăр" 1926). Фронтра, окопра, каскине хывсах хăйĕн пит-куçне çумăр çине тытать поэт. "Çу, çумăр чапкăр! Вăрçă хирĕ Тасалтăр, уçăлтăр тĕнче!" (Çумăр",1943).

Поэтăн романтикăллă кăмăл-туйăмне те шыв, юханшыв, кӳлĕ çеç вăйлăрах çуратать. Пулă яшки пĕçерни, шывра пĕчĕк ача пек "чӳхенни", "шампăлтатни" мĕн чухлĕ унăн сăвви-поэмисенче! Шыв - Ухсай сăввисен илемлĕ чĕлхине те чĕнтĕрлекен сăнарлăх мелĕ. Акă унăн эпитет-антитезисем, деталь-антитезисем мĕнлерех вăйă выляççĕ хайлавĕсенче: "вĕри кун"- "нӳрĕ курăк", "асфальтлă Мускав" - "сивĕ нӳхреп", "тусанлă хула" - "хирти уçă çил", "пăчă пӳлĕм" - "уçă сывлăм".

Е тата "çăлкуç", "авăр", "вак", "тĕтре", "кӳлĕ" "шурлăх", "сулă ", "атма", "сĕреке", "пулă хуранĕ", "чей", "сăра"... Кашни сăнарлăх никĕсĕнче - шыв, шыв татах шыв.

"Шыв хĕррине Фет лирик пек
Пырса ларасчĕ вăлтапа", -

тесе чӳхенет поэт хăй ĕмĕчĕсен тинĕсĕнче.

Юмăç çăвара шыв сыпса чирлекене пĕрĕхтернĕ пек, шыва кĕртсе çынна ят хунă чухне çылăха каçарттарнă пек, "ура тапса, пуçа ухса" тăракан Ухсай хăйне хупăрласа тăракан çылăхлă тĕнчене таса шывпа, сивĕ çумăрпа тасатма хатĕр:

"Вара таса тĕнче мунчи пуçланчĕ,
Çуса лӳшкетрĕ пирĕн ӳт-тире".

## Мунча кĕрĕттĕм Ухсайпа пĕрле!

Эх чăваш мунчийĕ те-çке Ухсай сăвви-поэмисенче! Нихăçан мунча урати урлă каçса курман çын та чăтса тăраймĕ поэта вуланă хыççăн: нимĕнле туркка е финн мунчи кирлĕ мар! "Тугли шала, йӳççи тула", - тесе пырса кĕрĕттĕм эпĕ мунча сакки çинче "пĕççи-каççине çӳлелле тăратса" хурăн милĕкпе (армути милĕкĕпе те çапăнать чăваш поэчĕ!) çапăнса рехетленекен "Якку пичче" патне! Унăн Кĕлпукĕпе те кĕме кичем пулас çук, анчах, тем, эпĕ те Уртеми

мучи пек (поэмăри тепĕр герой) вĕрине чăтаймасăр урайне тăсăлса выртăп пулĕ: пулчĕ вара Кĕлпукшăн кулмалли!

"Про хороших музыкантов говорят, что они научились играть в бане," - тет Н.И.Ашмарин хăйĕн словарĕнче (YIII том, 267 с.). Ку сăмаха ăсчах чăваш хушшинчех илтнĕ пулĕ-ха. Тен, поэт талантне вăратаканĕ, ун чунне тасатаканĕ, хавхалантараканĕ Силпин сивĕ шывĕ çеç мар, мунча та, мунча лапки те, милĕкĕ те, "çăра шап-шўр пăсĕ" те, кирĕк кăларни те, "хур ури пек" ўт тирĕ хĕрелни те? Эх ирĕке ярать те хăй, кăмăлне, хăй чĕлхине поэт мунчара! Мунча кĕрсе тухни уншăн "инçе коммунизмра хăна пулнă пекех" (хăнара вара чĕлхе сўтĕлет). "Тăпраллă урисене" поэт, ырă чăваш хресченĕ пек, мунчара тасатать. Мунча Ухсайшăн - çĕр çинчи турă панă, чăваш шухăшласа тупнă чи сăваплă вырăн, хăйĕн Эдем пахчине кĕричченхи тасату палли. Мускав студенчĕ "тăван йăла вĕрентнипе" "хĕл кирĕкне хырма" Сандуновски мунчине уттарать, лапки çине выртса "шеп сывлăх" кĕртекен милĕкпе рехетленет ("Силпи енчи çилсем"). Тăван киле аса илнĕ пекех уншăн ку.

Мунча такмакĕсĕр чăваш мунчин техĕмĕ çук:

**Çăтти-çатти тутарам,**
**Милĕкпеле çаптарам,**
**Ăшши парас вăйлăрах,**
**Кăларасчĕ чир-чĕре.**
**Мухмăр-сухмăр - тулалла,**
**Пăсĕ кĕтĕр шалалла!**

Ухсай Яккăвĕн Кĕлпукĕ те такмакласа çапăнса вăтă ўтне канăç кўрет:

**Йўççе тула хăвалар,**
**Тутли пултăр хамăрăн.**
**Тĕрĕс те мар, суя мар,**
**Лапка ылтăн хăмаран.**
**Милĕксем епле хитре**
**Çурăм тăрăх шурĕç-ха.**
**Вăрăмлатрĕç ĕмĕре,**
**Çирĕплетрĕç сывлăха.**

Тупата, "Кĕлпук мучи" поэмăри "Мунча" сыпăкри пек пурнăç вăйĕпе, автор савăнăçĕпе, вылянса-сиксе тăракан сăнарлă чĕлхепе киленсе курманччĕ. Чăваш поэзийĕнче те Ухсай пек чăваш мунчине гимнласа е одăласа никам та парайман, параймĕ те.

Хăй платник е кăмакаçă пек, Ухсай мунча купаланине те сăнлать поэмăра. Мунча шепĕ, поэт шучĕпе, пураран килет: "Чи тутли - çăка мунча". Хытăрах чăвашĕсем, час ан çĕртĕр тесе, мунчине юманран тăваççĕ: вăл вара поэтшăн йўçĕ. Вулакан сахал пĕлекен, тĕпчевçĕсем асăрхасах кайман пысăк эпикăллă, чип-чипер, тăпăл-тăпăл "Çĕр" ятлă поэминче Исмукпа Ярхун ывăлĕ мунча кĕнине те юратса сăнлать автор. "Хам çылăха çуса яни те кирлĕ", - текелеççĕ поэма геройĕсем.

Ухсайӑн милӗкӗ тепре чухне талисман евӗрех, вилӗме хирӗç пурнӑçа юратса тӑратнӑ символ:

Вилес килмест. Ешле-ха ирӗк
Йӗри-тавра тӗтреллӗ ир!
Кай вӑрмана, çых хурӑн милӗк,
Çемçе турат чӗр, кас та ирт..."
("Ярмуш бригадир вилсен")

Чӑвашӑн юрри-сӑвви те мунчаран тухнӑ пулӗ тет Ухсай, "Çӗр" поэмӑри герой куçӗпе милӗк çине, хӑрӑмланнӑ мачча çине, мунча чӳречинчи хӗвел таппшине пӑхса:

"Çавна кура такмак та,
калаçу та
Çуралнӑ пуль чӑваш мунчисенче".

Ӑмсанатӑп эпӗ Ухсай поэтӑмӑра. Нихӑш поэтринчен сисӗмлӗрех, чӑваш чунлӑрах пулнӑ вӑл, хӑйӗн пӗчченлӗхӗнче пурӑнма, хӑйӗн Эдем пахчипе киленме пӗлнӗ, тӑпраланнӑ урисенчен вӑтанман, чун гармонине çут çанталӑкра шыранӑ. Ахальтен мар вӑл: "Юратрӑм эп, хӗрсем, сире", - вырӑнне, "хирсем, сире" тесе ярать, тепӗр поэта вӑтӑр çул ытла хӗрсем çинчен анчах çырнишӗн, арӑмне пӗр сӑвӑ халалламаншӑн тиркет. Мӗн тӑвӑн, поэт характерӗ! Ухсай тӗнчин никӗсӗнче - çӗр тата ӑна тулӑхлӑ тӑвакан пысӑк саспаллиллӗ ШЫВ. Кӑмӑла çӗклекенни, сӑвӑ çырма вӑй кӗртекенни - шывсӑр хутма май çук ЧӐВАШ МУНЧИ. Шыв тата мунча - Ухсай поэзийӗн тӗнчине тӗреклекен никӗссенчен пӗрисем, вӗсемсӗр Ухсай поэзийӗ тӑлӑхрах курӑнӗччӗ, тути пӗтӗччӗ, чӗлхи мӑкарах пек туйӑнӗччӗ. Автор ӑна хӑех, вӑрçӑ вӑхӑтӗнче кӗвӗленӗ "Кӗлпуксем" ятлӑ сӑввинчех (акӑ ӑçтан килет иккен "Кӗлпук мучи" поэмӑна çырнин историйӗ) калать:

Пур çӗрте - ӑçта çитмерӗм,
Ялӑх мар мунча пирки.
Хурӑн милӗк çеç лекмерӗ
Хамӑр Силпири пекки.

Пилӗк тӑрӑх, çурӑм тӑрӑх
Çӑт та çат çапакайни,
Тупӑнмарӗ шыв тӑп-тӑррӑн
Силпире юхаканни.

Ху пӗлсен те çамрӑк тусӑм,
Эпӗ калӑп: - Ан тирке.
Çут çанталӑк пысӑк усӑ
Хунӑ ешӗл милӗке.

Мунчана тирке-тирке тӑр,
Чӑн искусство ан шыра!

1996 ç.